# РАЛЬФ ПАРВЕ

*Эстони*

## ТУСЛĂХ ЮРРИ

Атăл хĕрринчен, Нева çинчен те,
Ангара е Лена патĕнчен
Савнă вырăс тус пур çĕрсенчен те
Саламлать пире чун-чĕринчен.

Пальма йывăç улăп пек хăпарнă
Çĕршывра та пур тусăмăрсем.
Казахстан кĕтӳçине тăванăн
Ал паратпăр, хамăрăн тесе.

Çурçĕр пулăçи те — тăван ывăл
Пирĕн аслă, ырă çемьере.
Украина — хамăрăн çĕршыв вăл,
Кăмăллă грузин та — тус пире.

Санпала, чипер Эстони хĕрĕ,
Калаçать ту çĕрĕнчи пике:
Пĕр çулпа утать тăванлăх çĕре,
Халăхсен сасси — пĕр хор пекех.

Шав ӳсет килйыш — илемлӗ, сывӑ,
Сывӑ пултӑр ӗмӗрсем тӑршши.
Пархатар курать Совет ҫӗршывӗ —
Ман телейлӗ, ирӗклӗ ҫӗршыв!

1946